# Николай Симуновăн «Пурнăç юмах мар» кĕнекери сыпăк тăрăх хатĕрленĕ презентаци

Презентацие хатĕрлекенĕ

Аччари вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Давыдова Оксана Михайловна

Аннесем! Мĕн кăна шухăшламастăр-ши эсир пулас ачăр варта ӳтленсе аталаннă вăхăтсенче?



Эсир çуратнă ача мухмăр сĕрĕмĕпе чĕтресе сĕлекине çăтса çӳремĕ , хулпуççи таран çӳç айне путнă катемпи пек тĕршĕнсе, çĕçĕ тытса хăратса-хăмсарса та çӳремĕ.









Аннесем! Сирĕн пек кам хĕпĕртеме пĕлет пысăк тунсăхпа кĕттернĕ чун çут тĕнчене тухса кăшкăрса ярсан!



Аннесем!

Хăвăр ачăрсемшĕн нимĕн те хĕрхенсе тăрас çук эсир …



Аннесем! Калăр-ха çапах та, кам çуратса ÿстернĕ çав хăш-пĕр çапкаланчăксене, этем чысне тивĕç мар апăршасене?







Чӗнместӗр эсир, аннесем!
Мӗншӗн тесен унашкаллисене эсир ҫуратман.
Эсир ҫуратнӑ ача хӗвелпе танах пулнӑ.



Ачаш чĕреллĕ аннесем!
Ан хупăр куçăрсене, ан пăрăнăр вĕсенчен! Сирĕн суккăр юратăвăр çитĕнтернĕ калчасем вĕсем!







Ан тарăр вĕсенчен, çуралнă хыççăнхи пекех, çĕнĕрен алла илĕр...

Мĕншĕн çынлăхран тухса, этем чысне çухатса ӳсни  çинчен шухăшлăр, çын çинче çын тивĕçне  юрăхлă тума тăрăшăр, сирĕн тертлĕ кунăрсем харама ан кайччăр!



Ваттисем калашле,

ача-пăчана  çуратса янипе

çырлахмалла мар çав.